5729 54-224



ЯКОВ УХСАЙ



# КĔСЛЕÇĔПЕ УПА



ЧĂВАШГОСИЗДАТ — 1954

ЯКОВ УХСАЙ

# КĔСЛЕÇĔПЕ УПА

СĂВĂСЕМПЕ
ЮМАХСЕМ



ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1954

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
1 ноября 1954 г.
№ 273

# ЯКОВ УХСАЙ

Чăваш совет литературинче Яков Ухсай ячĕ вăтăрмĕш çулсенче палăрма пуçланă. Çавăнтанпа унăн творчестви çултан-çул аталанса, пуянланса пынă. Вулакансем Ухсайăн тĕрлĕ произведенийĕсенче хамăр халăхăн иртнĕ вăхăтри тертлĕ пурнăçĕпе кĕрешĕвне, революци хыççăнхи социализм строительствинчи ĕç-хĕлне, шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене кураççĕ.

Яков Гаврилович Ухсай 1911 çулта Пушкăрт республикинчи Пишпулек районĕнче Слакпуç ятлă ялта çуралнă. Унăн ашшĕ-амăшĕ чухăн хресченсем пулнă.

Сакăр çула çитсен Яков Ухсай ялти шкула вĕренме кĕнĕ, унта тăвата çул вĕреннĕ хыççăн Пишпулекри хресчен çамрăкĕсен шкулне вĕренме кайнă.

Çак çулсенче Яков Гаврилович вырăссен классикăлла литературин хăшпĕр произведенийĕсемпе паллашать, пуринчен ытла Пушкин, Лермонтов, Некрасов тата ыт. поэтсен сăввисене юратса вулать. Вăл çав вăхăтрах тата К. В. Ивановăн „Нарспи“ ятлă вилĕмсĕр поэмине, унăн юмахĕсене вулать, тăрăшса вĕренет, халăх пурнăçне сăнать. Çакă унăн ĕмĕтне, шухăш-кăмăлне çунатлантарнă, çамрăк чĕринче сăвăсем, поэмăсем çырас кăмăл çуратнă. Анчах вăл çакна та лайăх туйнă: поэт пулас тесен, кирек камăн та нумай-нумай вĕренмелле, тăван чĕлхене аван пĕлмелле, çырас ăсталăха вĕренмелле, ырми-канми ĕçлемелле. Поэт пулма ĕмĕтленекен çамрăк, çаксене асра тытса, 1930 çулта Мускава Государство университечĕн литература факультетне вĕренме каять. Ку вăхăта вăл халĕ акă мĕнле ăшă сăмахсемпе аса илет:

Кӑн-кӑвак профессорсем
Умӗнче ӑспа хӑват
Пуҫтарса, ман ӗмӗтсем
Илчӗҫ яр вӗҫме ҫунат.

Халь те пурнӑҫ тӑршшӗпе
Яланах аса килет
Ломоносов ячӗпе
Лартнӑ университет.

Яков Ухсай темиҫе ҫул хушши Мускавра „Коммунар" ятлӑ чӑваш хаҫачӗн редакцийӗнче, Ӗпхӳре—Пушкӑртсен наукӑпа тӗпчев институтӗнче ӗҫлет, Ульяновскра педагогика училищинче чӑваш литературипе чӗлхине вӗрентет. Ҫаван чухнех вӑл пулас учительсене вӗрентсе тавранса, вӗсен тетрачӗсене тӳрлетсе пӗтерсен, уроксем хатӗрлесен, пушӑ вӑхӑтсенче, каҫсерен, сӑвӑсем ҫырать. Поэтӑн малтанхи сӑввисем „Савӑнӑҫ кӗнеки", „Ял хыпарӗсем" ятлӑ сборниксенче пичетленсе тухнӑ.

Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑран таврӑнсан, темиҫе ҫул хушши, Яков Гаврилович Чӑваш АССР государство издательствинче редактор пулса ӗҫлет, „Тӑван Атӑл" альманах редакцилет.

Яков Ухсай творчестви пуян. Вӑл сӑвӑласа ҫырнӑ „Тутимӗр" трагедие, „Халӑхсен ылтӑн кӗнеки", „Вырӑс ачи", „Шӑпчӑк", „Шӑллӑм", „Влтава шывӗ хӗрринче", „Кӗлпук мучи" тата ытти поэмӑсене, сӑвӑпа ҫырнӑ романа чӑваш ӗҫҫыннисем юратса вулаҫҫӗ. Унӑн „Ҫул" романӗ, „Кӗлпук мучи" поэми тата суйласа илнӗ сӑввисен сборникӗ Мускавра вырӑсла тухнӑ. Ку кӗнекесем ҫинчен, Мускавра тухса тӑракан хулӑм журналсем пысӑк статьясем пичетлесе кӑларчӗҫ.

Яков Ухсая, унӑн литературӑпа искусствӑри ӗҫӗсене пысӑка хурса хакласа, Чӑваш АССР Верховнӑй Совет президиумӗ 1945 ҫулта Искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ ятне, 1950 ҫулта Чӑваш халӑх поэчӗн ятне панӑ.

* * *

Ҫак кӗнекере пичетленнӗ „Пуканесен бригади", „Кирле пионер „Хӗрлӗ ҫӑлтӑр" колхоз пухӑвӗнче тухса калани", „Хӗрлӗ галстук", „Кӗслеҫӗпе упа", „Автан ылханӗ" тата „Юман чукмар" сӑвӑсемпе юмахсене Яков Ухсай тӗрлӗ вӑхӑтра ҫырнӑ. Вӗсем тӑрӑх пирӗн вулакансем поэтӑн творчествипе хӑшпӗр таран паллашма пултараҫҫӗ.



## ПУКАНЕСЕН БРИГАДИ

### 1

Кирле ятлă шăллăм пур ман,
Ăслă та чипер ача.
Тап-таса хăй—кирĕк курмăн—
Кăмăлĕ çемçе, ачаш.

Ир-ирех паян вăранчĕ,
Çăвăнчĕ вăл супăньпе,
Хăнари пекех тумланчĕ,
Тăхăнчĕ шап-шур кĕпе.

Эп юри пăхса тăратăп:
Вăл турать кăтра çӳçне,
Уринче çемçе кăçатă,
Шарăх çыхрĕ хăй мăйне.

— Шăллăм, кам сана хистерĕ
Урама çак сивĕре?
— Анчăк выçă пулĕ,—терĕ.
Анчăкĕ тулта вĕрет.

Килкартне тухсан, вăл ячĕ
Лĕп шыв ун вăлашкине.
Сапнă çăнăх кăпăкланчĕ.
Вăл шăвик чĕнет тусне.

Кустăрма хӳреллĕ анчăк
Тухрĕ пăлтăр айĕнчен,
Ик уран тирпейлĕн ларчĕ,
Пăхрĕ шăллăм куçĕнчен.

Ут шăваран йĕкĕт, тейĕн,
Кирлене пăхса илсен.
Селĕп чĕлхипе телейлĕн
Анчăка калать хуллен:

— Пĕлтĕр тытнă кашкăр майлă
Пысăк пулăн, тусăм ман.
Эп санпа хавассăн кайăп
Колхоза хурал тăма.

Урусем ан пулччăр кукăр.
Санпа çӳрĕп сунара.
Какайпа шур тулă çăкăр
Преми парăп эп вара.

Çирĕ-çирĕ те хай анчăк,
Ырă чунлă Кирлене
Тав туса илчĕ сасартăк,
Пачĕ пĕчĕк тяппине.

Мĕн калам сире ал-хапăл
Хамăн шăллăмçăм çинчен?
Çапăçман та харкашман вăл
Тусĕ-йышĕ хушшинче.

Çуркунне çитсен, курăп эп,
Каçченех вăл урамра.
Хăй тунă турпас карапĕ
Ярăнса ишет шывра.

Е патак ҫине утланнӑ,
Савӑнса чупса ҫӳрет,
Е чулсем вӑл купалать:
— Днепрострой тӑватӑп,—тет.

Е ҫерем ҫинче путеккӗн
Сиккелет вӑл ҫаруран.
Шӑллӑм, шӑллӑмҫӑм-чечекӗм,
Эс пурне те пултаран!

2

Шӑллӑм кӗчӗ. Унӑн пичӗ
Хӗрлӗ-хӗрлӗ, чӑн хӑмач.
Ҫийӗ-пуҫӗ лайӑх питӗ.
Хӑй ӗҫчен, тӗкех тӑмасть.

Ывӑҫне тултарнӑ тулӑ.
— Мӗн тӑватӑн, шӑллӑм, халь?
— Ав кӑсья ҫиесшӗн пулӗ,
Юрласа памасть ахаль.

Читлӗхри кӑсья-кӑсьяҫӑм
Юрламашкӑн тытӑнать,
Ҫунатне сарса вӑл ячӗ,
Ҫуркунне пек туйӑнать.

Шӑллӑм тытрӗ пӗчӗк хачӑ,
Пушӑта касать кӑна:
Ут мӗлки туса хӑтланчӗ,
Утлантарчӗ пӗр ҫынна.

Чӳрече ҫине тӗрлерӗ,
Касрӗ темӗн чухлӗ хут.
— Мӗн тӑватӑн, шӑллӑм,—терӗм,—
Мӗншӗн йышлӑ юланут?

—Кур, пичче, илемлӗ мар-и?
Урӑм-сурӑм вӑрҫӑ,—тет.
Ак Чапаев утлӑ ҫарӗ
Колчака,—тет,—хӳтерет.

3

Пукане вӑййи ҫӳрерӗ
Путӑк-шӑтӑк ҫулсемпе,
Тем шырарӗ, тем йӗрлерӗ.
Ҫыннисем—ӑш кӗрӗкпе.

Тӗмеске ҫинче хаяррӑн
Йӑраланчӗ шур упа.
Умӗнче ҫури кӑшкаррӑн
Ҫаврӑнать чупа-чупа.

— Шӑллӑм, шӑллӑмҫӑм, тӑванӑм,
Малалла эппин кала!
Вӑййусем пыраҫҫӗ санӑн
Юмахри пек паттӑрла.

Акӑ ҫак хитре карапӗ
Ӑҫталла апла ишет?
Тӗлӗнсе ларатӑп эпӗ.
Ман питех пӗлес килет.

Ку тата кам мыскари-ши?
Шур сухалĕ—кĕреçе.
Юмахри чике старик-ши?
Чăн та, çавă пулсан çеç...

— Чим, тăхта пиччемçĕм, паллăн,
Тĕлĕнсе ан кай-ха пит.
Пур-пурах ун пек сухаллă
Чаплă çын, профессор Шмидт.

Ку карап çĕнсе çӳренĕ,
Ватнă, çĕмĕрнĕ пăра.
Вăл кĕрешнĕ, лӳчĕркеннĕ
Тинĕсри хаярлăхра.

... Самолет вĕçсе хăпарчĕ,
Кăмака çине ларать.
— Мĕн кунта капла пуçланчĕ?
Шăллăм, шăллăмçăм, кала!

Путнă-аннă Шмидт карапĕ.
Вĕрнĕ вирлĕ çил-тăман.
Тăрнасен кĕрхи карти пек
Вĕçнĕ çичĕ ярапла н.

Харсăр летчиксем хăтарнă
Пăр çинчи юлташсене.
Пин-пиншер вĕçсе хăпарнă
Ялавсем Мускав çине.

Летчиксен чăн-чăн ăсталăх
Пулнă сивĕ çурçĕрте.
Вĕсене юратнă Сталин
Алă панă Кремльте.

4

Тепӗр шухӑш шухӑшларӗ
Чипер шӑллӑмҫӑм Кирле,
Ҫӗнӗрен выля пуҫларӗ
Пуканесемпе пӗрле.

— Шӑллӑм, эс вӑйӑа тӑсасшӑн
Тепӗр шухӑш тупрӑн-и?
Ӑҫталла тухса каясшӑн
Шӗлепкеллӗ пукани?

— Вӑл, колхоз правлени членӗ,
Тукасри Хритун пичче,
Тарласа паян ӗҫленӗ
Сарӑ тулӑ пуссинче.

Сехетне пӑхать—куратӑн?—
Шӑп ҫитсессӗн кӑнтӑрла,
Тухмалла ӗҫе бригада,
Вир те ясмӑк ҫулмалла.

Урапа ҫине тиерӗ,
Кӳлсе ячӗ анчӑкне:
— Тилхепе тытса пыр!—терӗ.
Хушрӗ пӗр пуканине.

— Шӑллӑм, эс ӑҫта каясшӑн
Лартрӑн анчӑка кӳлсе?
Халӗ мӗншӗн ушкӑн-ушкӑн
Пухӑннӑ пуканесем?

— Тыр вырма каять бригада.
Тӑкӑна пуҫланӑ вир.

Кучер пек ларать пĕр ватă.
Вăл—Филиппов бригадир.

Манăн шăллăм кăшт шăпланчĕ,
Алăка яри уçать.
Вĕрчĕ-вĕрчĕ те хай анчăк,
Урапа туртса тухать.

Чип-чипер ĕçчен бригада
Тухрĕ аслă урама.
Шартлама сивĕ кунра та
Шăллăм кайрĕ тыр вырма.

*1934.*





## КИРЛЕ ПИОНЕР „ХĔРЛĔ ÇĂЛТĂР“ КОЛХОЗ ПУХĂВĔНЧЕ ТУХСА КАЛАНИ

Пухура Ярмуш пиччемĕр
Калани хитре, анчах
Итлемешкĕн, тен, тиркемĕр,
Эп илсен кĕске сăмах.

Эпĕ кăшт кăна каласшăн
Çамрăк ĕмĕрĕм çинчен.
Картинкка çинчи пек маншăн
Курăнса тăрать тĕнче.

Маччара та çут электăр,
Урамра та—пур çĕрте.
Ĕмĕр тăршшĕнче курман-тăр
Кун пек тĕлĕк асатте.

Юмахри çуртсем лараççĕ
Чăх ури çинче анчах,
Лампăсем унта çунмаççĕ,
Машинсем те çук пачах.

Клубăн çурчĕ, аттесемĕр,
Çӳлĕ сăрт çинче ларать,
Никĕсне хăватлă цемент
Тĕпренми тытса тăрать.

Юмаха эпир хăварнă
Çитмĕл çичĕ çул кая,
Тырпула акса тултарнă
Тикĕс тинĕс пек уя.

Асапри çынсем шыранă
Телейне, ăна вара
Юптарса тупма пултарнă
Юмахри патшалăхра.

Паттăр çын хĕçпе туранă
Çичĕ пуçлă çĕлене.
Чăн-чăн пурнăç хурлантарнă
Юмахсен ăстисене.

Халăха хура çĕленĕн
Сăхакан усал патша
Питĕр хулинче çӳренĕ,
Утнă чĕрĕ юн ашса.

Çăкăр вырăнне çитернĕ
Вĕсене çуллен мăян,
Çăпатапала çӳретнĕ,
Атăпа пушмак паман.

Аслă Ленин хатĕрленĕ
Пирĕн харсăр çар вăйне,
Çакă вăй персе ӳкернĕ
Патшапа ун эшкерне.

Ленин тунă çар пĕтернĕ,
Ватнă чул пек инкеке,
Улпута та ӳплентернĕ,
Çапнă пур уретнике.

Аслисем, эсир юхтарнӑ
Ҫутӑ куншӑн вӗри юн,
Юнӑрпа ҫырса кӑларнӑ
Савӑнма пире саккун.

Ӗмӗрлӗх телей тупасшӑн
Ҫапӑҫни сая кайман.
Ҫав телейшӗн тав тӑвасшӑн
Тайӑлать яш пуҫӑм ман.

Куҫӑмсемӗр пирӗн чакӑр!
Хурлӑх ҫук, юхмасть куҫҫуль...
Пурӑнма пире ҫул такӑр,
Пур енче те—уҫӑ ҫул.

Хырӑм тутӑ, тум та питӗ.
Аслисем, тавах сире!
Выҫлӑх та, мӑян шӳрпи те
Пулмӗ пирӗн тӗнчере!

Хура пӳрт те йӳҫӗ тӗтӗм
Ӗлӗк пулнӑ, тет, иккен.
Ун ҫинчен ыйтса эп пӗлтӗм
Аннерен те аттерен.

Пирӗн пӳрт маччи, урайӗ
Ҫутӑ та, тирпейлӗ те.
Мускавра кӑларнӑ кайӑк—
Патефон—юрлать килте.

Шӗкӗр, пурнӑҫ ҫулӗ аслӑ
Курӑнса выртать ума,
Ҫавӑнпа та-ҫке хаваслӑх
Тулнӑ пӗтӗм чунӑма.

Ешерсе ӳсет пек лайăх
Ырлăх сачĕ чĕрере,
Хӳхĕм шăпчăкпа саркайăк
Чĕвлетет пек ирсерен.

Телейпе пĕçернĕ çăкăр,
Кукăль те сĕтел çинче
Выртнине курса харкаштăр
Чикĕ леш енчи тĕнче.

Хапсăнма усал тăшманăн
Шухăш пур, анчах мĕнле
Çĕтĕк кĕрĕкпе хуплайăн
Пирĕн аслă хĕвеле!

(*Пурте алă çупаççĕ. Колхоз оркестрĕ „Авăнмасăр, хуçăлмасăр“ ятлă юрă кĕввине калать.*)

*1935*



# ХĔРЛĔ ГАЛСТУК

### 1

Ялан ирхи çанталăк
Çап-çуттăн килнĕ май,
Кăвар пек хĕрлĕ галстук
Çыхатчĕ Николай.

Тумтирĕ ун якаччĕ,
Йăл кулă—питĕнче.
Вăл çăмăллăн утатчĕ
Шап-шурă юр çинче.

Савса юрлатчĕ юрă,
Хавасчĕ яланах.
Телейлĕ пулнă—урăх
Мĕн кирлĕ ачана...

Хăй амăшпе пуплетчĕ
Килте пĕр пек ачаш.
Ӳссе çитсессĕн летчик
Пуласшăнччĕ ача.

## 2

Тем тĕрлĕ аппаланчăк
Сассен кĕрлевĕнче
Шартах сиксе вăранчĕ
Ача кровать çинче.

Çĕрте выртать минтерĕ.
Мĕн пулнă? Ку мĕскер?
Ун умĕнче тискеррĕн
Тăрать пĕр офицер.

Сехре хăпса та кайĕ,
Сӳ тăвĕ çамрăк чун:
Юнланнă пӳрт урайĕ...
Тулта—хĕвеллĕ кун.

Ун амăшĕ, мăнтарăн,
Выртать урайĕнче.
Кăкăр суранĕ тарăн,
Суранĕ ик енче.

Фашист урса тискеррĕн
Пăхать ача çине,
Çăтса ярас пек хирĕç
Чарать усал куçне.

Хаяр çич ют, тăсланчăк
Ухтарнă-мĕн нумай!..
Пурне те халь ăнланчĕ
Çап-çамрăк Николай.

Калать куççуль тăкмасăр,
Йĕрмесĕр, пионер:
— Çук, галстука çыхмасăр
Ан çыпçăн эс, тискер!

Кăвар пек хĕрлĕ галстук
Пÿртре стена çинче,
Юнланнă хĕç пек галстук
Тăшман куç умĕнче.

— Çыхам, вара вĕлерĕр!..—
Вăл тытрĕ галстукне.
Пăшал сасси кĕрлерĕ.
Юнланчĕ пĕрене.

Суран ăна çĕнтерчĕ,
Ÿкерчĕ урайне.
Чĕри тĕлне хĕстерчĕ
Ача хăй галстукне.

Вăл хытă чăмăртарĕ
Ăна тата, тата.
Анчах алран ямарĕ,
Памарĕ çич юта.

*1941*



## КĔСЛЕÇĔПЕ УПА



Ним илме те чухлаймарĕ
Пасарта Микуç пичче,
Кунĕпех ун-кун танккарĕ
Ват шăмшакĕ ыриччен.

Сутрĕ вăл пĕр тĕркĕм пушăт,
Пилĕк мăшăр çăпата,
Хыпалать те—енчĕк пушă,
Кĕмĕлсем сахал унта.

Çук таварĕ-кучченеçĕ.
Пуш-пушах киле килме
Намăс мар-и, мăшкăл мар-и
Тăнлă пуçлă этеме?

Пултăр чун канма хаваслăх!
Мĕн пулин те илмелле!
Илчĕ йăнтăр-йăнтăр саслă
Хĕрĕх хĕлĕхлĕ кĕсле.

Вăл ăна çакать тирпейлĕн
Халĕ çурăмĕ хыçне,
Çамрăк çын пекех телейлĕн
Уттарать тăван ялне.

Хӗлӗхне шăна лексен те,
Лăпкă ҫил те хирӗҫле
Сӗртӗнсен кăшт, халӗ ӗнтӗ
Янраса илет кӗсле.

Ҫул хитре, утма хавaслă,
Йк енче вăрман ҫăра.
Сулланать хăй тӗллӗн алă,
Ывăнма пӗлмест ура.

Кайăксен пусланнă ӗнтӗ
Кӗввисем унта-кунта.
Юрлама пӗлмест пулин те—
Кăвăвик!—тет уйăп та.

Янăрать ҫӳлте шаланкă.
Ун мӗлки ӳкет ума.
Ешӗл курăклă усланкă
Йыхăрать ларса канма.

Сывлăш сулхăн, витӗр уҫă.
Ҫăкасен шăрши пылак.
Киленсе пӗрре Микуҫăн
Ларасси килет пăртак.

Вăл екки ярса канмалăх
Уҫланка кӗрсе каять,
Хăнари пукан пек лайăх
Тунката ҫине ларать.

Чӗркуҫси ҫине хурать вăл
Йăнтăр-йăнтăр кӗслине,
Пăрчăкан чуппи пек ҫăмăл
Ҫӳретет пӳрнисене.

Хӑй чунне парса кӗслеҫӗ
Киленсе вылянипе
Кӗввисем тухса вӗҫеҫҫӗ
Курӑнман ҫунаттипе.

Ҫил вӗрмест, уяр ҫанталӑк
Кайнӑ тутлӑ ыйӑха.
Шӑтӑрт-шӑтӑрт сас сасартӑк
Вӑратать тавралӑха.

Пуҫтармасӑр пӗлтӗр юлнӑ
Хӑрӑк-харӑк вут-ҫаппа
Ҫӗмӗрсе тухать хӑюллӑн
Йк уран тӑрса упа.

Ваттине хӑй ӗнтӗ вата,
Ашкӑнмалӑх вӑйӗ пур,
Мӗкӗрсе те, ҫухӑрса та
Ташласа килет маттур.

Сӗм вӑрманӑн утаманӗ
Урипе ҫупа-ҫупа
Сикнине эсир курман-и?
Пултарать иккен упа.

Чунилли, вӑрман тискерӗ,
Кун пекех ташлать тесен,
Микуҫран кулса пӗтерӗ
Пӗтӗм ялӗ витлесе.

Икӗ урипе хавассӑн
Пилӗкне тытма пӗлет,
Шӑппӑн-шӑппӑн, шавсӑр-сассӑр
Тунката тавра иртет.

Акăш-макăш утаманăн
Мĕншĕн шăп ташши вара?
Ма тесен, пĕлетĕр, унăн
Çăмламас çемçе ура.

Ак вăл тӳрĕ, ак вăл хуçăк
Авкалать пӳне, сикет.
Хăраса кайса Микуçăн
Ал-ури тăр-тăр чĕтрет.

Тарăхса Микуç мăнтарăн
Ăшĕнче вăрçать хăйне:
— Эп ăçта тарма пултарăп?
Лекрĕм мăшкăл капкăнне.

Ватăлсан та, ăсăм катăк,
Вилмĕп кил сакки çинче,
Пĕтмеллех пулать сасартăк
Çак упа çăварĕнче.

Ывăнманччĕ, мĕншĕн лартăм
Эп уçланкă варрине?
Мĕншĕн хытă янраттартăм
Йăнтăр-йăнтăр кĕслене?

Хам ума упа камичĕ
Сирпĕнсе килес чухне
Маларах çăпан тухинччĕ
Шĕвĕркке пӳрне вĕçне!

Пĕт эппин эс, хывăх пуçăм,
Килентер упа шăлне!..
Çӳçĕнчен туртса Микуçăн
Вăрçасси килет хăйне.

Вăрмантан çак чунилесшĕ
Тухасса пĕлес пулсан,
Вăл кунта кĕрсе çӳресшĕн
Чарăнмастчĕ ăнсăртран.

Кăштăр-кăштăр вăл утатчĕ
Ерипен кăна ялне,
Пуртăпа ватса туратчĕ
Çĕр çăтманĕ кĕслине.

...Ывăнмасăр, чарăнмасăр
Урипе çупа-çупа,
Тунката тавра пĕр харсăр
Çаврăнса сикет упа.

Вăйĕ-халĕ çук Микуçăн,
Чунĕ хытнă пек тăрать.
Хăраса анранă куçĕ
Виç упа пек кăтартать.

Аллисем кĕсле тытмаççĕ.
Ӳкерсен—çитет инкек.
Куçĕсем упан пăхаççĕ
Вутлă икĕ кăмрăк пек.

Шăмарса Михал Иванчă
Тяппипе тыттарсанах,
Вилнĕ пек Микуç йăванчĕ
Йăкăлттин туса анчах.

Тĕлĕнсе упа йăвашшăн
Пăхкалать этем çине,
Тепĕр хут сиксе ташласшăн
Каркалать урисене.

Чеерех пулма Микуҫăн
Шухăш пур, упа ҫине
Пăхкалать пĕр хĕсĕк куҫĕ
Леш пăхса тăман чухне.

— Чунилли, вăрман тискерĕ,
Пыршăма пăтратиччен
Ҫаласа юлам-ха,—терĕ
Ăшĕнче Микуҫ пичче.

Кĕслине хăвăрт майларĕ,
Пĕр пӳрни хĕлĕхсене
Лексенех, упа пуҫларĕ
Тăрăс-тăрăс ташшине.

— Урисем иккен кĕҫтеҫҫĕ.
Кăмăлне кӳме пулать,—
Тенĕ чух Микуҫ кĕслеҫĕ
Тунката ҫине ларать.

Хальхинче вăл хăвăрт-хăвăрт
Ҫӳретет пӳрнисене.
Вăрманта пăртакҫă тăвăр
Пулмалла кĕввисене.

Ҫавăнпа вĕҫсе каяҫҫĕ
Кăн-кăвак тӳпенелле,
Упана сикме хушаҫҫĕ
Ҫăмăллăн та ҫӳлелле.

Кукăрне чăнах та кукăр
Урисем, анчах кунта
Йăкăш-йăкăш, тăпăр-тăпăр
Ташлама упа ăста.

Хĕл хута вăрман кахалĕ
Çывăрать те—вăй нумай.
Çинĕ вăл çулла сахал-и
Пыл карасĕ те какай.

Утарта вĕлле те ватнă,
Çинĕ пыл вăрман патши,
Çавăнпа иккен хăватлă
Ярăнса пырать ташши.

Чылаях ĕне, пăру та
Çухалать çуллен ялта,
Çавăнпа та питĕ тутă
Вăл çӳренĕ вăрманта.

Кĕслине татти-сыпписĕр
Каласа ларса пулмасть.
Ерипен çеç сисĕнмесĕр
Тĕттĕм пулĕ, çитĕ каç.

Çичĕ-сакăр чалăш юлнă
Хĕвеле анса ларма,
Çавăнпа Микуç хăюллăн
Шухăшлать килне кайма.

Тунката çинчен вăл анчĕ,
Кĕслине кала-кала
Ерипен кăна уттарчĕ
Малалла, тăван яла.

Лăпланать чĕри Микуçăн,
Кĕслинче нумай хăват
Пуррипе вăл каçăр пуçăн
Паттăр пек хăйне туять.

Икĕ аллипе пĕр харăс
Савăнса çупса, упа
Йăкăш-йăкăш, тăрăс-тăрăс
Ташласа пырать çулпа.

Сăрт çинче кĕтӳ сӳретчĕ,
Ĕнесен мĕлкисене
Каç хĕвелĕ ӳкеретчĕ
Çухрăм тăршшĕ инçене.

Çывăхра Михал Иванчă,
Йăраланчăк утаман,
Пынине курсан, хăпарчĕ
Çăп-çăра хура тусан.

Тапса сикрĕ ушкăн сурăх,
Ĕнесем хӳрисене
Тăратаççĕ, пусă тăрăх
Саланаççĕ пур енне.

Упапа Микуç кĕслеçĕ
Малалла та малалла
Утнăçем пырса тухаççĕ
Ĕнтрĕк тĕлĕнче яла.

Йыт-качка шăрша чухланă—
Акăш-макăш упине
Куриччен тарса пытаннă
Çурт-хуралтăсем айне.

Ку камит чиперрĕн ирттĕр!—
Ун çине шикпе анчах
Вăрттăн çурăк-çарăк витĕр
Пăхкалать ача-пăча.

Хăлтăр-халтăр, тăйлăк-тайлăк.
Кивĕ лапчăк пӳрт умне,
Кĕввине татса, сасартăк
Чарчĕ вăл хаяр тусне.

Пӳрт тăрри çĕрсе йăваннă,
Кив тăпра çинче паян
Ашкăрса ӳссе кашланă
Кантăр пек çăра мăян.

Килкарти те çук Микуçăн,
Çук нимле хуралтă та.
Пур енче те хир пек уçă
Курăнса выртать кунта.

Ялĕнче упа хыпарĕ
Саланать иккен, вара
Алăра кӳсек-чукмарĕ
Хатĕр кӳршĕ-аршăра.

— Ватăлсан та ăс кĕмерĕ
Анкă-минкĕ миммӳне.
Чунилли, вăрман тискерĕ,
Пăвтăр-и ĕнесене?—

Теççĕ те килсе тăраççĕ
Кӳршисем мĕнпур енчен,
Çухасем тума шутлаççĕ
Çăмлă паттăр тирĕнчен.

Мĕкĕрсе Михал Иванчă
Вутлă кăмрăк пек куçне
Чарчĕ те сиксе хăпарчĕ
Хăлтăр-халтăр пӳрт çине.

Кĕтесрен пĕр пысăк татăк
Пĕрене илет упа,
Вăркăтса ярать сасартăк
Вăл ăна пĕтĕм вăйпа.

Малалла вăрман тискерĕ
Пĕтĕмпе пĕренене
Кăларса тытса силлерĕ
Çиллине тӳсмен енне.

Кулăшла, анчах хаяррăн
Пуçсенчен тыттариччен,
Кӳршĕри çынсем чăл-паррăн
Тарчĕç пӳрт таврашĕнчен.

Аякра хăйсем тăраççĕ,
Чăмăрланă алăпа
Юнаса çăвар караççĕ
Типĕ пыр тĕппи саспа:

— Сывă пултăр ăсăр-пуçăр!
Эй, сыхланăр! Эй те эй!
Çĕр çăтман упи Микуçăн
Валеçет пире телей!

Пĕр канаш тăвар-ха, халăх!
Çакă çăмлă инкеке
Хальтерех йĕрке тумалăх
Чĕнтерес уретнике!

Микуçне виç хут чĕр хулă
Çурăм тăрăх вашлатса
Иртнĕ чух пит усă пулĕ,
Ăс вĕрентĕ, иçмасса.

Эрленсе Микуç шутларĕ,
Аллине чĕри патне
Тытрĕ те çапла каларĕ
Йăлăнса этемсене:

— Ырă халăх, кӳршĕ-аршă,
Ан хускатăр инкеке,
Ан чĕнсемĕр-ха тархасшăн
Чунилли уретнике!

Кӳсекпе чукмар та пуртă
Тытнипе мĕскер усси?
Ман хитре кĕслемçĕм пур та—
Савăнтарĕ ун сасси.

Ман упам пĕрех тĕпренчĕк
Тивмĕ пурлăх тавраш не,
Вăл чипер кăна вĕренчĕ
Хамăр халăх ташшине.

— Ташлаттар эппин пăртакçă,
Тĕлĕнтер эппин пире!—
Теççĕ те çынсем тăраççĕ
Халь те питĕ инçетре.

Пур çынна та курма уçă
Сарлака çерем çинче
Каласа ларма Микуçăн
Пур вăй-халĕ чĕринче.

Пăрчăкан пекех чупаççĕ
Пӳрнисем васка-васка,
Кĕввисем сиксе тухаççĕ
Хӳхĕм сасăллă, яка.

Йантăр-йантăр янрасассăн,
Пӳрт çинчен сикет упа,
Ярăнса пырать хавассăн
Урипе çупа-çупа.

Çамрăк каччă пек ансатăн
Çирĕп тытрĕ пӳ-сине,
Лапчăнса та, авăнса та
Тĕлĕнтерчĕ çынсене.

*1940–1953*



## АВТАН ЫЛХАНӖ



Пурӑннӑ, тет, пӗр ялта
Мучипеле кинемей.
Икӗ чӑх та пӗр автан
Кӳнӗ иккӗшне телей.
Сар автанӗ, ӑслӑ чун,
Шурӑмпуҫӗ килнӗ чух
Савӑнтарнӑ ирхине
Икӗ ватӑ хуҫине.

Чӑхсемпе автан пӗрре
Чакаланнӑ тислӗкре.
— Сӑмсапа сӑха-сӑха
Тӗплӗн шырӑр, тупӑр-ха!—
Тенӗ чӑхсене автан.
Сиксе тухнӑ ӑнсӑртран
Йӑлтӑр-йӑлтӑр йӑлтӑркка
Ҫаврака ылттӑн курка,
Тата кӗмӗл кашӑк та
Выртах панӑ ҫавӑнта.

Ҫунатне автан сарать,
Ҫатан ҫине хӑпарать,
Авӑтать те авӑтать,
Авӑтса ҫапла калать:

— Асаннепе асатте
Вăрăм-вăрăм ĕмĕрте
Курнă хĕн те, курнă хур.
Халĕ ĕнтĕ мулĕ пур!
Ылттăн-кĕмĕл пирĕн ку!
Кик-ки-рик! Кук-ку-ре-ку!

Куркана та кашăка
Тăрăшсах такка-такка
Сăмсисемпе тасатсан,
Урисемпе çутатсан,
Йслă сар автан çумне
Чăххисем çатан çине
Юнашар пырса ларса
Кăтиклерĕç савăнса:
— Кăт-кăтик, ка-ка-как,
Ылттăна чи пысăк хак!
Кăт-кă-тик! кă-тик, ка-как,
Кĕмĕлĕн усси пурах!

— Асаннепе асатте
Тайкаланчăк кив пўрте
Халĕ ĕнтĕ ишмелле,
Çĕнĕ çурт-йĕр илмелле!
Кик-ки-рик!—тет сар автан,
Чунтанах савăннăран.

...Пырать такăр урампа
Сиктĕрмеллĕ урапа.
Чарăнать кĕç мăшăр ут.
Урапа çинчи улпут
Ларкăчри тарçа хушать,
Хăтăрса çапла калать:

— Илсе пар-ха эс мана
Кашӑка та куркана!

Хӑпӑл-хапӑл хай автан
Пырӗнче сас пур таран
Авӑтать те авӑтать,—
Авӑтса ҫапла калать:
— Мучипеле карчӑка
Хӗрхенмесӗр, кашӑка,
Пысӑк ылттӑн куркана
Мӗншӗн илтӗн эс хӑвна?
Ман ылханӑм пулӗ ку!
Кик-ки-рик! Кук-ку-рек-ку!

Тарҫине улпут калать:
— Ха, итле-ха. Ылханать.
Выҫӑ хырӑмлӑ хресчен
Лӑпӑр-лапӑр килӗнче
Ӳснӗ хай, анчах та ун
Пур иккен ылханлӑ юн.
Ӳктӗр-ха ҫатан ҫинчен,
Яр туяпа уринчен!

...Лӑпкӑ кӳлӗ хӗрринче,
Ҫавра сӗтел хушшинче
Пӑсланать вӗри апат.
Хай улпут лара парать,
Ылттӑн курка—умӗнче,
Кӗмӗл кашӑк—аллинче.
Кӗтмен ҫӗртен ӑнсӑртран
Килсе ҫитнӗ леш автан,
Авӑтать те авӑтать,
Авӑтса ҫапла калать:

— Мучипеле карчăка
Хĕрхенмесĕр, кашăка,
Пысăк ылттăн куркана
Мĕншĕн илтĕн эс хăвна?
Икĕ ваттăн килĕнче
Çăкăр çук сĕтел çинче,
Ман ылханăм пулĕ ку!
Кик-ки-рик! Кук-ку-рек-ку!—
Çакна йăлт улпут илтет,
Шăннă пек тăр-тăр чĕтрет,
Чĕнтерет сĕтел умне
Пĕтĕм тарçи-тĕрçине:
— Автана халех тытса
Кайса ярăр-ха пусса!
Путса вилтĕр çавăнта,
Пулмĕ тек сасси кунта!

Тарçă-тĕрçĕ сиккелет,
Хăвалать те хӳтерет
Мĕскĕн сарă автана,
Тытаймасть çаплах ăна.
Пĕр вĕçет те пĕр сикет,
Тĕк те мамăк вĕçтерет,
Пĕтĕм вăйĕ пур таран,
Хăтăлма тăрать автан,
Парăнмасть усалсене,
Ырса çитнĕ çунатне
Лăстăр-лăстăр тукалать,
Йывăç çине хăпарать,
Авăтать те авăтать,
Авăтса çапла калать:
— Мучипеле карчăка
Хĕрхенмесĕр, кашăка,
Пысăк ылттăн куркана

Мĕншĕн илтĕн эс хăвна?
Икĕ ваттăн килĕнче
Çăкăр çук сĕтел çинче,
Пӳрт хутма та юлман вут.
Çич инкек сана, улпут!
Ман ылханăм пулĕ ку!
Кик-ки-рик! Кук-ку-рек-ку!—
Тарçă-тĕрçĕ сиккелет,
Хăвалать те хӳтерет,
Автана хайхи тытать,
Сив пусса яра парать.
Тарăн шывлă пусăра
Çăварне кара-кара
Антăхать те вăй-халтан
Каять харсăр сар автан:
— Çăт, çăт, пырăм, типĕт!—тет.
Чăннипех те шыв типет.

Тепĕр усă ирхине
Лăпкă кӳлĕ хĕррине
Усăлма улпут тухать,
Пĕр-пĕччен канса утать.
Кайăксем иккен нумай,
Тĕрлĕ сасă чăй та чай
Илтĕнет унта-кунта,
Янратса тăрать сада.
Чун илесшĕ леш автан
Тарăн пусăра путман,
Авăтать те авăтать,
Авăтса çапла калать:
— Мучипеле карчăка
Хĕрхенмесĕр, кашăка,
Пысăк ылттăн куркана
Мĕншĕн илтĕн эс хăвна!

Ман ылханăм пулĕ ку!
Кик-ки-рик! Кук-ку-рек-ку!

Сассине улпут илтет,
Шăннă пек тăр-тăр чĕтрет,
Чĕнтерсе илет умне
Пĕтĕм тарçи-тĕрçине:
— Итлĕр-ха эсир мана,
Вĕри хутнă мунчана
Автана пĕр хупăр та,
Çунса вилтĕр çавăнта!

Усалтан усал улпут
Хушнă пек, тип-типĕ вут
Турттарать тарçи-тĕрçи.
Тăррине вĕçсе çерçи
Ларайми вĕри мунча
Шартлатса ларать анчах.
Çавă вĕри мунчана
Хупса лартрĕç автана.
Тĕк те, мамăк та ĕнет,
Киккирикĕ те пиçет,
Пĕтĕм вăйĕ пур таран
Мекĕрленчĕ те автан:
— Хĕсĕн, пырăм, хĕсĕн!—тет,
Пĕрĕхет, шыв сирпĕтет.
Чăннипех те вĕрине
Сивĕтет мунчарине.

Алăка ярах уçса
Тарçă кĕнĕ чух мунчан
Сар лапки çинче автан
Авăтать те авăтать,

Авăтса çапла калать:
— Мучине те карчăка
Хĕрхенмесĕр, кашăка,
Пысăк ылттăн куркана
Мĕншĕн илтĕн эс хăвна!
Икĕ ваттăн килĕнче
Çăкăр çук сĕтел çинче,
Пӳрт хутма та юлман вут.
Çич инкек сана, улпут!
Ман ылханăм пулĕ ку!
Кик-ки-рик! Кук-ку-рек-ку!

Сассине улпут илтет,
Шăннă пек тăр-тăр чĕтрет,
Чĕнтерсе илет умне
Пĕтĕм тарçи-тĕрçине:
— Итлĕр-ха эсир мана.
Тытса пусăр автана!
Пӳне сирĕн вĕтмелле,
Пуçне хамăн çимелле!

Усалтан усал улпут
Хушнă пек, тип-типĕ вут
Турттарать тарçи-тĕрçи.
Пиçнĕ ĕнтĕ—лар та çи!
Пăсланать автан яшки.
Аш тушки те тукмакки
Пулчĕ тарçи-тĕрçинче,
Пуçĕ—улпут аллинче.

Автанран инкек-синкек
Тӳснĕ хыççăн кĕреке—
Калаçса та юрласа
Улпута ларма ансат.

Ирттĕр,—тет,—хуйхи-суйхи.—
Савăнса улпут хайхи
Таврари улпутсене
Чĕнчĕ хăйĕн кил-çуртне.
Çуртĕнче çурта нумай
Пур енче те çуннă май
Йăлтăр-ялтăр та çап-çут
Курăнать, анчах улпут
Никама та паллаймасть,
Чăх пек нимĕн те курмасть—
Чăннипех те сар автан
Янă ун çине ылхан.
Хÿхĕм халăх хушшинче
Шăп-шай çурçĕр тĕлĕнче:
Мĕн иленнĕ-ши çурта,
Мĕн-ха пулнă улпута?
Анасланă пек ăнсат
Ун çăварĕ уçăлать.
Пырĕ тĕпĕнчен,—шалтан,—
Кăларать пуçне автан:
— Тарăх ĕнтĕ эс, улпут!—
Кик-ки-рик!—тесе виç хут
Авăтать те авăтать,
Пур çынна та хăратать.

Малашне вара улпут
Çичçĕр çитмĕл çичĕ хут
Темĕнле те тухтăра
Тĕнчере шыра-шыра
Çÿресен те ылханран
Хăтăлма пултарайман.
Çул çинче е килĕнче
Вăл ларать-и сак çинче—
Вăхăт хăй пырса çитет,

Карланкана чĕпĕтет,
Çăвара та кăтăклать,
Пырĕ тĕпĕнчен,— шалтан,—
Кăларать пуçне автан,
Авăтать те авăтать,
Тек улпута ылханать.

Кайăк-кĕшĕк йăвара,
Пулă та тӳлек шывра
Тутлă кăтăш пулнă чух,
Лăпкă çурçĕр çитнĕ чух
Шарт сиксе те хăраса,
Урăм-сурăм тарласа
Вăранса каять улпут.
Питĕ тĕрĕс виçĕ хут
Пырĕ тĕпĕнчен,— шалтан,—
Кăларать пуçне автан,
Авăтать те авăтать,
Пĕтĕм çурта янрататать.

*1938*



## ЮМАН ЧУКМАР



Тахҫанах, ӗлӗк-авал,
Чалӑш ура кӑвакал
Юрӑсем те юрласа,
Кӗнеке те вуласа
Тӗлӗнтернӗ вӑхӑтра
Эпӗ хамӑр таврара
Пӗлеттӗмччӗ ик ватта—
Вӑрӑм ӗмӗр тӑршшӗнче,
Ансӑр ана ҫийӗнче
Ҫакӑ икӗ апӑршан
Ҫӑвӑн-хӗлӗн тӑрӑшса
Ӗҫлесе чакнӑ хӑвачӗ,
Курӑнман ҫаплах кулачӑ.

Умлӑн-хыҫлӑн ҫулсерен
Кантӑр евӗр вӗлтӗрен,
Хупахпа ҫӑра мӑян
Ашкӑрса хӑпаракан
Мӗскӗн ялӑн хӗрринче,
Кивӗ хура пӳртӗнче,
Йывӑр ватӑ ӗмӗрте
Тарӑхатчӗҫ иккӗш те—
Шӑкӑл-шӑкӑл калаҫма,
Хӑйсене те тӑрантма

Кирлӗ пулнӑ паттӑр ывӑл,
Ачапчасӑр питӗ йывӑр.

Тек шӑвать ҫул хыҫҫӑн ҫул.
Шӗпӗр-шӗпӗр тӑр куҫҫуль
Хӗретсе тӑрать куҫа,
Кӑвак ҫӳҫ витет пуҫа,
Ал-ура та имшеркке,
Пуснӑ утӑм та кӗске,
Кӗрхи шӑннӑ курӑк пек,
Чаксах пырать вӑй-тӗрек,—
Мӗн тесен те кирлӗ ӗнтӗ
Тӑр ухмах ача пулин те!

Хушка ҫӑлтӑр тӳпене
Ҫӗкленетчӗ, ирхине
Карчӑк тутлӑ ыйхинчен
Сиксӗ тӑчӗ пӗр пӗччен,
Пӑшӑлти кӑвас чӗрес
Йӳҫнине пырса пӗлес
Терӗ те, итленӗ чух
Шухӑш тупрӗ ватӑ чун:
Хучӗ вӑл сӗтел ҫине
Йӳҫсе ҫитнӗ чустине,
Унаса васка-васка
Турӗ пысӑк чӑмӑркка.
Лартрӗ алӑ та ура,
Кӑвапа та пуҫ, вара,
Ҫын пекки пулса выртсан,
Лартрӗ куҫ та кӑмрӑкран:
— Ывӑл пул!—тесе пӗрре
Кулса илчӗ ӑш пӳртре.
— Паттӑр пул!—тесе ӑна
Ҫурӑмран ачаш кӑна

Çапса илчĕ йĕтĕрпе,
Лартрĕ вăл кĕреçепе—
Кăмака сап-сарă паттăр
Пĕçерсе эппин кăлартăр!

Виçĕ çĕр те виçĕ кун
Иртнĕ хыççăн харсăр чун
Кăшкăрать те ĕрĕхет,
Тапса ячĕ питлĕхе,
Сиксе анчĕ урайне,
Варкăштарчĕ сив кĕле,
Кисрентерчĕ тапнипе
Кив пӳрте вăл пĕтĕмпе,
Кăмака çине хăпарчĕ—
Иван пултăр унăн ячĕ!

Ĕнтĕ иртрĕ виçĕ çул,
Килĕнче укçа та мул,
Канлĕ пурнăç, пархатар
Пуласси-ха паллă мар.
Паттăр тухнă кахала—
Ун çинчен ялтан яла
Кулăшла элек-челек
Çерçисем чĕвлетнĕ пек
Сарăлать-çке таврана,
Култарать-çке пур çынна.
Кун пек камитленнине
Ватă ашшĕ-амăшне
Питĕ намăс итлеме,
Çăтă пырлă этеме
Тăрантса пыма та йывăр,
Тарăхтарчĕ сарă ывăл.
Чăннипех ача кахал,
Тăр лӳппер, анчах та халь

Ивана хăртса тăкма,
Тиркеме те хурлама
Кирлĕ мар. Ку вăл—юмах
Пултăр урăхла сăмах.
Кăпăш йӳçнĕ чустаран
Тунă ӳт аран-аран
Пиçнĕ-çке кăмакара,
Пулнă вăл начар вара.
Вăтă карчăкăн килте
Пулнă чĕрĕ çирĕк те
Ăвăс вучĕ—пĕçерме,
Кирлĕ пек ăна хĕртме
Тупăнман иккен юманĕ,
Çавăнпа имшер Иванĕ.

Çавăнпа вăл ыйăха
Питĕ хытă ернĕ-ха,
Çирĕп вăйлă этеме
Пĕтĕмпе тухса çитме
Пĕвĕ-сийĕ ӳснĕ май
Çывăрас пулать нумай,
Кăмака хĕртмен ӳтне
Çутă ăшă çуркунне
Хĕвелпе хĕрттермелле,
Мунчана та кĕртмелле,
Кунсерен сĕткен апат
Памалла ăна хăват—
Тин вара килме пултарĕ
Унăн улăпла хастарĕ.
Тупнă хăй валли йăва
Кăмака çинчи Иван,
Каласан та, хăнк тумасть,
Çывăрать вăл çĕр те каç,
Çиесси çеç килнĕрен

Кӑнтӑрла хутран-ситрен
Тутлӑ ыйхине уҫса
Машлатса суйлать пӑрҫа
Амӑш сапнӑ кӗл ҫинчен;
Хӑйӗн пӗвӗ вунҫичче
Ҫитнӗ евӗр яштака,
Хулпуҫҫи те сарлака.
Вӑл пӗр ҫапӗ, самантра
Кӑнтӗ сӑрӑ кашкӑра.
Тахҫанах кӗрнеклӗ каччӑ
Тытмалла алла тӑпачӑ!

Тӑвӑл пӗр эрне хушши
Вӗҫсӗр-хӗрсӗр ши те ши
Шӑхӑрса ҫӳре-ҫӳре
Пур хуралтӑ, ҫурт-йӗре
Турӗ хулӑм кӗрт айне,
Ҫил ҫиллес ачисене
Ҫухӑртать мӑръесенче.
Хирсенче, урамсенче
Пур ҫӗрте юр пит те тарӑн—
Шыв кӳме каймасть хӗрарӑм.

Амӑш чунтан ӳкӗтлет:
— Кай, ачам, тархасшӑн,—тет.
— Пӑрҫа ҫисе ларнӑ чух
Имшерленчӗ манӑн чун.
Чӗптӗм вӑй та ҫук, анне.
Мана халӗ юр ҫине
Кутсӑр-пуҫсӑр ҫил-тӑман
Йӑвантарӗ,—тет Иван.
Амӑш тупрӗ пӗр хайла,
Ывӑлне йӑпатмалла

Турилкке тулли икерчӗ
Ҫуласа пӗрре ҫитерчӗ.

Кӑмака ҫинчен Иван
Сикрӗ-анчӗ, йывӑртан
Силлентерчӗ урайне,
Ҫӗтӗк-ҫатӑк кӗрӗкне
Йапӑрт-япӑрт тӑхӑнчӗ,
Шӑлсем витӗр шӑхӑрчӗ,
Селӗм авӑк кӗвенте,
Мӑшӑр витре илчӗ те
Утрӗ тарӑн ҫырмана,
Урипе пӗрре кӑна
Тапнӑ хыҫҫӑн пӑрӗ ванчӗ,
Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв хумханчӗ.

Сивӗ шывлӑ витрере
Ҫӑт та ҫат ҫапса хӳре
Курӑнса каять малтан,—
Ярӑнать иккен ҫӑрттан.
Иван ихӗрсе кулать,
Ташласа ҫапла калать:
— Килӗмре аннеҫӗм халӗ
Ҫатмара сана ӑшалӗ!

Ҫӑрттан пуҫне кӑларать,
Йӑлӑнса ҫапла калать:
— Сана вӑрӑм ӗмӗрте
Кирлӗ пулӑп эпӗ те.
Тутлӑ мар шывак какай,
Ун усси пулмасть нумай,
Тата шӑммӑм йӗплӗ-ҫке!—
Яр-ха мана ирӗке!

Асăнмалăх сыхлама
Ил-ха виçĕ хуппăма.
Кирлĕ чух пĕрне ĕнтетĕн,
Телейне вара кĕтетĕн.

— Сăмахна ан ман, çăрттан,
Ан суйсам!—тесе Иван
Виçĕ çутă хуппине
Сӳсе чикрĕ кĕсйине.
Тарăн авăра пулла
Вăл чăмтарчĕ каялла,
Мăшăр тулли витрепе
Утрĕ хăй сукмакĕпе,
Кĕрĕкне аран-аран
Хывса çакрĕ пăтаран,
Анасларĕ, турткаланчĕ,
Кăмака çине хăпарчĕ.

Кутсăр-пуçсăр çил-тăман
Тепĕр виçĕ талăкран
Чарăнман та пӳртсене
Хӳсе кайнă юр айне.
Ухлĕме капанĕнчен,
Улăма анкартинчен
Турттарма пултарайман,
Шăварма та шыв çукран
Пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхе
Халăх кĕртнĕ хĕнлĕхе.
Кавлеме юлман енне
Мĕкĕрсе тăрать ĕне,
Витере ырхан лаша
Çинчĕк улăма ашса
Кĕçенет, анчах та халĕ
Çывăрать тĕнче кахалĕ.

Ашшĕ-амăш килĕнче
Çакă сивĕ кунсенче
Ăшăнман кăмакана
Сĕтеле те пукана
Хутнă вутă вырăнне,
Каснă сак хăмисене.
Вăратсан та вăранман
Кăмака çинчи Иван.
Чустаран унанă паттăр
Çывăрать çаплах хăр та хăр.

Виçĕ талăкран кăна
Тăрса ларнă Ивана
Ватă амăш сив килте
Пĕр кĕртесшĕн ӳкĕте,
Сăмахпа та тустарать,
Ухватпа та хăмсарать:
— Вăрмана кайсам пĕрре,
Вутă кирлĕ сивĕре!
— Пăрса çисе ларнă чух
Имшерленнĕ манăн чун,
Аллăма йăтма та халь
Чĕптĕм чухлĕ çук вăй-хал.
Пĕрре вĕрĕ çил-тăман,
Йăкăлт ӳкĕп,—тет Иван.
Йăпатса ăна мĕн калăн,—
Яланах уяв кахалăн.

Ашшĕ тин илет киссе,
Тахçанхи çава çĕççе
Ушапуç кашти çинче
Тупнă хыççăн пӳртĕнче
Янратса хăйра-хăйра

Çивĕчлетрĕ те вара
Картари пĕрех чуна—
Мекекек качакана—
Çил-тăман усал чухне
Пусса пачĕ карчăкне—
Чустаран унанă паттăр
Çинĕ хыççăн вут турттартăр!

Тата тепĕр самантран
Лăкăр-лăкăр тăвакан
Хурантан какай шăрши
Салансан та, анмĕ-ши
Кăмака çинчен Иван?
Виçĕ кунлăх тăрансан,
Çывăрса каяс чухне
Пуллăн çутă хуппине
Вăл пĕрре ĕнтсе çунтарчĕ,
Кĕсйине чиксе пытарчĕ.

Кун иртет те çĕр иртет.
Çил-тăман çаплах кĕрлет,
Хăрăм пек сĕм тĕксĕм каç
Уйăха та кăтартмасть,
Хĕвеле те кăнтăрла
Кустарать вăл çăмхалла
Хулăм пĕлĕт хушшине,
Чухăн пӳртĕн мăрйинче
Акăш-макăш ахăрать,
Сехрене те хăптарать.
Сивĕ тăр-тăр чĕтренке
Ӳт-тире те ертрĕ-çке—
Çывăрать, юмах каларĕш,
Пĕр Иван çеç чунçунтармĕш.

Акӑ виҫӗ талӑкран
Ялт сиксе тӑрать Иван,
Хӑй шӑнса кӳтнипеле
Пӗтӗм пӗвӗ-сийӗпе
Ӗнтӗркет, кӑн-кан пӑхать,
Кӑтӑр-кӑтӑр хыҫкалать
Кирӗкленнӗ ӗнсине,
Пӑхкалать мачча ҫине.
Урайне те тытнӑ пас,
Маччана та тытнӑ пас,
Кӑмака та ӑшӑ мар—
Пысӑк ырӑ пархатар
Килессе кӗтме пӑрахтӑр
Чустаран унанӑ паттӑр!
Кӑмака ҫинчен Иван
Сикрӗ-анчӗ, йывӑртан
Силлентерчӗ урайне,
Хӗрӗх саплӑк кӗрӗкне
Йапӑрт-япӑрт тӑхӑнса,
Тухса утрӗ васкаса,
Ҫитрӗ тарӑн ҫырмана,
Урипе пӗрре кӑна
Тапнӑ хыҫҫӑн пӑрӗ ванчӗ,
Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв хумханчӗ.

— Эп сана, ҫӑрттан юлташ,
Хӗрхенме килмен, чӑш-паш
Тӑвӑп ӗнтӗ хальхинче
Ҫавракана ҫатма ҫинче.
Хӑтӑлаймӑн аллӑмран!—
Тет ҫиллес саспа Иван.
Ҫакӑ пысӑк тӗркӗше
Илтнипе ҫӑрттан ишсе

Пычĕ те пуçне кăларчĕ:
Мĕн-мĕн кирлĕ-ха? Калаччĕ!

— Эсĕ ыррăн хушнипе
Эпĕ утнă çул-йĕрпе
Васкаса паян ирех
Пĕр лашасăр-мĕнсĕрех
Каçăртса туртисене
Манăн кивĕ пӳрт умне
Пырса лартăр йăлт кăна
Çитмĕл çич çара çуна!
Хĕрĕх саплăклă тумпа
Эпĕ шăнтăм, çавăнпа
Халĕ, çакă ирхине,
Килсе лартăр ман çине
Сахрун купса çĕлĕкĕ,
Васлей пуян кĕрĕкĕ,
Урăх уесри Михал
Патăр мана кăвакал,
Килтĕр унăн килĕнчен,
Тĕпсакайĕ хӳттинчен
Йӳç сăра та пĕр пичке—
Михал тӳстĕр инкеке!—
Терĕ вăл, хуллен уттарчĕ,
Кăмака çине хăпарчĕ.

Чăннипех те тамаша
Пуçланать-мĕн: юр ашса
Халăх ун-кун чупкалать,
Пĕççисене шарт çапать.
Тем пулса иртет ялта.
Хапхасем унта-кунта
Уçăлаççĕ шăлт та шалт,
Çунасем те пĕр самант

Лашана та кӳлĕнмен,
Пĕккине те лектермен,
Çил пек хăвăрт вашкăртса
Чалăш пӳрт умне пыраççĕ,
Умлăн-хыçлăн чарăнаççĕ.

Ку ялтан чылай инçе
Пĕр хула пасарĕнче
Яштака Сахрун купса
Лавккара пустав сутса
Ал çупатчĕ—ăнсăртран
Темĕнле хăяматран
Çил килет те çĕлĕкне,
Хăнтăр тирлĕ çĕлĕкне
Хывса илет пуçĕнчен,
Çавăрать çуртсем çинче—
Хăнтăр çĕлĕк пĕлĕтре
Чавка пек вĕçсе пĕрре
Явăнса çухалнине
Янкăр уçă ирхине
Курчĕ те хула пасарĕ
Тĕлĕнсе кайса шавларĕ.

Хĕрĕх çухрăмри ялта,
Çил-тăмансăр вырăнта
Ятлă çын—Васлей пуян
Илĕм-тилĕм ир паян
Кӳлнĕ чаплă мăшăр ут,
Мăшăр ут мар, мăшăр вут.
Вăл хирте чипер кăна
Чуптаратчĕ хăнана.
Çул та питĕ такăрччĕ,
Çанталăк та лайăхчĕ.
Акăш-макăш çил-тăман

Килсе тухрĕ ăнсăртран,
Пăр-пар юра вĕçтерет,
Кĕрĕке хывса илет—
Çав самант килет сасартăк
Тепĕр хут уяр çанталăк.

Урăх уес ялĕнче,
Михал куштан килĕнче
Юрласа, кĕрле-кĕрле
Пӳрт тулли хăна-вĕрле
Ăшшăш ларнă самантра
Кăвакалĕ хӳранра
Пиçнипе хускалнă чух
Алăка кĕрет-ши чун—
Алăк хăй яр уçăлать,
Çил кĕрет те ухтарать,
Тарăн тĕпсакайĕнчен,
Икĕ юпа хушшинчен
Пичкене илет йăтса,
Кăлтăр-кăлтăр кустарса
Кăларать урамалла,
Хуранти кăвакала
Вĕçтерсе таçта шутарчĕ,
Шӳрпине кăна хăварчĕ.

Кăмака çинче Иван
Яхăнне те çывăрман,
Ырă пулă кучченеç
Ярасса вăл кĕтнĕ çеç.
Çăмартан кĕтесĕ çук,
Тӳр сăмахăн кукăр çук—
Çырмари чее çăрттан
Ивана манса кайман.
Кĕрĕк те пур, çĕлĕк пур,

Тӗсӗпе те хӑй матур
Курӑнса ларать паян
Нар пек питлӗ сар Иван,
Кӑвакалӗ умӗнче,
Йывӑҫ алтӑр аллинче—
Кун пекех качча ахахӑн
Ҫутатас килет юмахӑн.
Кӑмака ҫинче Иван
Ӗҫсе-ҫисе тӑрансан,
Ҫил ачашшӑн ерипен
Алӑка уҫать яри—
Ни алли ҫук, ни ури—
Ивана йӑтса кӑларчӗ,
Пӗр ҫуна ҫине вырттарчӗ.

Ҫара ҫунан ик енче
Ҫӗнӗ селӗм ӳрече.
Тутӑ паттӑр сар Иван
Сылтӑмми ҫине чавсан
Тайӑнса канса выртать,
Такӑнмасӑр такмаклать:
— Ырӑ пулӑ хушнипе,
Манӑн ҫуна йӗррипе
Ҫил те ҫитми хӑватпа
Хӑвӑрт пытӑр ним ҫула
Пӑхӑнмасӑр пур ҫуна!
Пурӑш варне ҫитмелле,
Тарӑн вара кӗмелле—
Ҫил-тӑман вара лӑпланӗ,
Ҫавӑнта улпут вӑрманӗ.

Ҫитмӗл ҫич ҫара ҫуна
Ыткӑнаҫҫӗ йӑлт кӑна,
Нимӗнле те инкеке

Пăхăнми сике-сике
Тупансене шăхăртса,
Хăйсем тăман кăларса
Çулсăр-йĕрсĕр тӳрĕлле
Лерелле те лерелле
Вашкăртса пырса тухаççĕ,
Умлăн-хыçлăн чарăнаççĕ.

Хăй хăяккăн выртнă та
Такмаклать Иван кунта:
— Пулă панă ырлăхпа
Çитмĕл çичĕ çунапа
Килсе çитрĕм эпĕ халь:
Кашласа, вăрман, хускал!
Манăн пӳрт те лартмалла,
Манăн вут та хутмалла.
Ĕççĕр-хĕлсĕр выртакан
Пăчкă-пуртă вырăнтан
Йăнтăр-йăнтăр калаçса
Тухтăр, кастăр йывăça,
Сĕм вăрман мана итлетĕр,
Çунасем çине тиентĕр!

Çивчĕ пăчкă, пуртă та
Кайăк пек унта-кунта
Ярăнса вĕçсе çӳрет,
Йывăça касса кĕрет—
Пур çĕрте те шăплăх çук,
Пур çĕрте те тук та тук,
Пур çĕрте те каснăран
Кĕрлесе ларать вăрман.
Çил те килчĕ ахăрса,
Вĕрен йăтса шăхăрса
Шавлаттарчĕ вăрмана,

Çитмĕл çичĕ çунана
Пуслăх хучĕ те хăварчĕ,
Юр тустарчĕ те çухалчĕ.
Пуш çуна ӳречинчен
Уртăнса, чун-варĕнчен
Савăнса Иван тăрать,
Кăшкăрса такмак калать:
— Пулă панă ырлăхпа
Çитмĕл çичĕ çунапа
Ват аттеçĕм савăнма,
Ват аннеçĕм ташлама
Селĕм вут та пĕрене
Хăй тиерĕ сĕм вăрман.
Халĕ ĕнтĕ пĕр юман
Манăн çамрăк пуçăма
Тем инкекрен хăтарма
Чукмарлантăр та чутлантăр,
Ман çуна çине йăвантăр!

Йăнтăр-йăнтăр пăчкăпа
Пысăк пуртă тем вăйпа
Сикрĕç-тухрĕç шăхăрса,
Иккĕш те шавпа сасса
Аякка салатнăран
Кĕрлесе ларать вăрман.
Çакă тĕркĕш хумĕнче
Йывăçсен тăррисенчен
Юр та, хăрăк-харăк та
Ӳккелет унта-кунта.
Икĕ хурçă тус ăста
Тăрăшса ал-хапăлта
Юмана ӳкерчĕç те,
Туратне ирте-ирте

Туса хучĕç пĕр чукмар—
Иван çумне юнашар
Йăпшăнса выртма васкарĕ
Кутамас юман чукмарĕ.

Хăй вăрманĕ икĕ хут
Шавлă пулнине улпут
Илтнĕ хыççăн çиленет,
Сăнчăртан вĕçерттерет
Кашкăр пек вĕшлесене,
Чĕнтерсе илет умне
Пĕр эшкер салтак, тата
Тарçă-тĕрçĕ хуралта
Тинкер пăхса тăмалла,
Ивана тылламалла—
Ун пуçне улпут кастарĕ,
Шалчаран çакса хăварĕ.

Шурă паслă вăрмантан
Сехремет хайхи Иван
Çитмĕл çичĕ çунапа
Çулсăрах çара уйпа
Вĕçтерсе асар-писер
Килнине кĕтсе эшкер
Çул çинче тăрать усал,
Хатĕрлет хĕçпе пăшал,
Салтаксем Иван умне
Тухиччен мăйăхсене
Пĕтĕрсе яштак тăраççĕ,
Вĕшлесем сиксе выляççĕ.

Хайхи-майхи сар Иван
Хăнк та тумасть улпутран,
Хăпартмасть те сехрине,

Яра парать такмакне:
— Пулă панă ырлăхпа
Çитмĕл çичĕ çунапа
Килтĕм эпĕ вăрмана,
Ёмĕрте пĕрре кăна
Аттеме савăнтарма,
Аннеме ташлаттарма
Илтĕм вут та пĕрене,
Килте питĕ кирлине.
Çăрттан пулă хушнипе,
Пĕтĕм халăх çиллипе
Кӳтесе эппин хаяррăн
Çич юта тылла, чукмарăм!

Чи малтан чукмар çӳле,
Кăн-кăвак тӳпенелле
Вашлатса хăпарчĕ те
Кĕчĕ хулăм пĕлĕте.
Çухалмарĕ-ши айван?—
Шикленсе Иван пăхсан,
Ăмăрткайăк пек чукмар
Калама та çук хаяр
Анчĕ пĕтĕм вăйĕпе,
Иртрĕ вăл çĕр çумĕпе,
Тытăнать хайхи вара
Хăй кăларнă тăвăлра
Вĕшлене те салтака
Пусĕнчен шакка-шакка
Ислетме те лапчăтма,
Леш тĕнчене ăсатма.
Вăл сулмаклăн çапнипе
Хĕç те ванать кĕленче пек,
Чĕлпĕр-чĕлпĕр тăм чӳлмекĕн

Саланать пăшал кĕпчекĕ.
Уй-хирте юман чукмар
Тепĕр хут вĕçсе вăр-вар
Çавăрнать те тӳпене,
Хулăм пĕлĕт хушшине
Пытанать пĕр курăнми,
Чылайччен шавне пами
Тăнă хыççăн вăй-хăват
Шилесе каллех анать,
Хальхинче улпут çуртне,
Алăк евĕр кантăкне
Çĕмĕрсе кĕрсе каять,
Тепĕр кантăкран тухать,
Шăхăрса кĕрет пĕрре,
Шăхăрса тухать тепре.
— Вырт, чукмар!—тесе Иван
Кăшкăрса каланăран
Чăннипех юман чукмарĕ,
Пырса выртрĕ, хускалмарĕ.

Мĕн-ха пулнă чукмара,
Кермене кĕрсе вара
Тунă мĕскер тамаши,
Мĕн унта шыранă-ши?
Çиленсе иккен унта
Вăл ширанă улпута.
Чуллă тарăн тĕпсакай
Çăлăнма нимле те май
Парайман иккен лешне.
Чĕлпĕр-чĕлпĕр урайне
Ватнă та юман чукмар
Кĕрсе кайнă чăл та пар,
Çамкинчен пĕрре тыттарнă,
Улпута кăнтса хăварнă.

Çитмĕл çич çара çуна
Шырамасть яка çула,
Кăпăш юрлă уй-хирте
Çил пек çăмăл, вирлĕ те
Малалла та малалла
Вашкăртса кĕрет яла.
Çунасем ял хĕрринче,
Пĕчĕк пÿртĕн умĕнче
Умлăн-хыçлăн чарăнсан,
Яшт сиксе тăрать Иван,
Аллипе пĕрре сулать,
Такмакне çапла калать:
— Пулă панă ырлăхпа
Сиртĕм эпĕ асапа.
Халĕ йывăç хăй пушантăр,
Çуртăм хăй ларма пуçлатăр!

Кĕпĕр-кĕпĕр пĕрене
Тайлăк-тайлăк пÿрт умне
Ярăнса кустарăнать,
Купана кĕрсе выртать.
Ушкăн-ушкăн кĕреçе
Тытăнать хайхи ĕçе,
Тĕпĕр-тĕпĕр васкаса
Шакăрт шăн çĕре касса
Сирпĕнет ик айккине,
Шурă кĕртлĕ юр çине
Пуртăсем сиксе тухаççĕ,
Туклатаççĕ, калаçаççĕ.

Эпĕ паттăр килĕнче
Пултăм хам пĕррехинче,
Иванпа чуна уçса

Шăкăл-шăкăл калаçса
Лăпкăн ларнă чух хĕлле
Шăпчăкпа çерçи пĕрле
Пĕр турат çинче ларатчĕ,
Хĕрлĕ юр тулта çăватчĕ.

*1936—1953*



## ТУПМАЛЛИ

*Стр.*

Пуканесен бригади . . . . . . . . . . . 3
Кирле пионер „Хĕрлĕ Çăлтăр“ колхоз пухăвĕнче тухса калани . . . . . . . . . . . 12
Хĕрлĕ галстук . . . . . . . . . . . 16
Кĕслеçĕпе упа . . . . . . . . . . . 19
Автан ылханĕ . . . . . . . . . . . 31
Юман чукмар . . . . . . . . . . . 40

ЯКОВ ГАВРИЛОВИЧ УХСАЙ

ГУСЛЯР И МЕДВЕДЬ

Обложка и рисунки художника
*Г. Д. Харлампьева.*

Редактор *Ст. Павлов.*
Худ. ред. *М. Ильин.*
Тех. ред. *А. Краснов.*
Корректор *В. Васильев*

НТ 00383. Сдано в набор 20-VII-1954 г. Подписано к печати 9.X-1954 г.
Объем 4,68 п. л., 2,42 уч.-из. л.
Формат 70×92/16. Заказ № 2252.
Тираж 5000 экз. Цена 85 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.

*г. Чебоксары, Володарского, 5.*

## Вулакансене пĕлсе тăма

Республикăри кĕнеке магазинĕсенче Чăваш АССР государство издательстви юлашки вăхăтра кăларнă çакăн пек кĕнекесене сутăн илме пулать.

Л. **Агаков**. Ырă кăмăллă çынсем. 168 стр., тиражĕ 5000 экз., хакĕ 3 тен. 15 пус.

А. **Алга**. Юлташпа юнашар. Калавсем. 182 стр., тиражĕ 3000 экз., хакĕ 4 тен.

**И. Козлов**. Крымра вăрттăн ĕçлени. Вырăсларан Тани Юнпа И. Максимов-Кошкинский куçарнă. 352 стр., тиражĕ 3000 экз., хакĕ 6 тен. 40 пус.

**А. Васильев**. Арсений юлташ (Фрунзе çинчен çырнă калавсем). Вырăсларан А. Лазарева куçарнă. 160 стр., тиражĕ 3000 экз., хакĕ 2 тен. 95 пус.

**И. Попов**. Çемье. Тăвата пайлă, вунă картинăллă пьеса. Вырăсларан Тани Юн куçарнă. 68 стр., тиражĕ 2000 экз., хакĕ 2 тенкĕ.

**Т. Шевченко**. Кобзарь. Çĕнетсе кăларнă издани. Кĕнекери сăвăсене коллектив куçарнă. 240 стр., тиражĕ 3000 экз., хакĕ 5 тен. 60 пус.

**М. Горький**. Сочиненисем. Чăваш писателĕсем куçарнă. 700 стр., тиражĕ 5000 экз., хакĕ 13 тен. 50 пус.

**П. Журба**. Александр Матросов. Повесть. Вырăсларан М. Юрьев куçарнă. 348 стр., тиражĕ 3000 экз., хакĕ 6 тен. 70 пус.

**Г. Коновалов**. Çеçенхир маякĕ. Вырăсларан В. Садай куçарнă. 400 стр., тиражĕ 3000 экз., хакĕ 7 тен. 40 пус.

**К. Тренев**. Любовь Яровая. Пьеса. Вырăсларан В. Алагер куçарнă. 92 стр., тираж 2000 экз., хакĕ 2 тен. 10 пус.

## Вулакансене пӗлсе тӑма

Тесоубайкари кӗнеке кӑтаилосене Чӑваш АССР государство издательстви халиччен кӑларнӑ ҫак кӗнекесене суту ...не туянӑ.

Л. Агаков. Ыра кӑмӑллӑ ҫынсем. 166 стр., тираже 5000 экз., хакӗ 3 тен. 15 пус.

А. Лаптев. Юлташла ҫынсем. Калавсем. 16 стр., тираже 2000 экз., хакӗ 4 тен.

Н. Ковалев. Ирхи ҫаралтӑҫсем. Вырӑсларан Тени Юрьин И. Максимов-Кошкинский куҫарнӑ. 352 стр., тираже 4000 экз., хакӗ 6 тен. 70 пус.

А. Весеньев. Арсений тетте (Фрунзе ҫинчен ҫырнӑ калавсем). Вырӑсларан А. Лазарев куҫарнӑ. 160 стр., тираже 8000 экз., хакӗ 2 тен. 85 пус.

В. Попов. Семье. Тӑвата пайлӑ пурӑ картинӑллӑ пьеса. Вырӑсларан Тени Юрӑ куҫарнӑ. 6 стр., тираже 2000 экз., хакӗ 2 тенкӗ.

Т. Шевченко. Кобзарь. Сӑвӑсемпе поэмӑсем. Кӗнекере сӑвӑсене коллектив куҫарнӑ. 1 стр., тираже 8000 экз., хакӗ 5 тен. 40 пус.

М. Горький. Сочиненисем. Чӑваш писателӗсем куҫарнӑ. 700 стр., тираже 6000 экз., хакӗ 13 тен. 60 пус.

П. Журба. Александр Матросов. Повесть. Вырӑсларан М. Юрьев куҫарнӑ. 348 стр., тираже 3000 экз., хакӗ 6 тен. 70 пус.

Г. Коновалов. Ҫеҫенхир мӗнке. Вырӑсларан П. Сави куҫарнӑ. 400 стр., тираже 3000 экз., хакӗ 7 тен. 40 пус.

К. Тренев. Любовь Яровая. Пьеса. Вырӑсларан Н. Ахтер куҫарнӑ. 92 стр., тираже 2000 экз., хакӗ 2 тен. 10 пус.

Цена 85 коп.

Я. УХСАЙ

# ГУСЛЯР И МЕДВЕДЬ

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
1954